25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ДЕКАБРЬ 27 ВЫРСАРНИКУН 299(6234) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

I. Дон шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра пирĕн войскăсем малалла наступлени тăваççĕ

Декабрĕн 26-мĕшĕнче Дон шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра пирĕн войскăсем, малтанхи еннеллех ăнăçлă наступлени туса пырса, 15—20 километр малалла кайнă. Вунпĕр кун хушши наступлени туса, пирĕн войскăсем пĕтĕмпе 145—200 километр малалла куçнă.

Пирĕн войскăсем халăх пурăнакан темиçе вуншар пункта, вăл шутрах ТАЦИНСКАЯ ятлă хулапа пысăк чугунçул станцине, ВЕРХНЕ-ТАРАСОВКА ятлă район центрĕпе пысăк чугунçул станцине, КРИВОРОЖЬЕ, КАШАРЫ, ЕФРЕМОВО-СТЕПАНОВКА ятлă район центрĕсене, КАСЬКОВКА, НИКОЛЬСКАЯ, ШАРПАЕВКА, ИЛЬИНКА, КОСТИНО-БЫСТРЯНСКИЙ, ГРУЗИНОВ ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тытса илнĕ. Декабрĕн 16-мĕшĕпе 26-мĕшĕ хушшинчи çапăçусенче пирĕн войскăсем пĕтĕмпе халăх пурăнакан 812 пункта, вăл шутрах 8 район центрне, чугунçул çинчи 7 пысăк станцие ирĕке кăларнă.

Декабрĕн 26-мĕшĕ вĕçленнĕ тĕле тыткăна илнисен хисепĕ татах 6.300 çын чухлĕ ўснĕ. Декабрĕн 16-мĕшĕпе 26-мĕшĕ хушшинчи çапăçусенче пирĕн войскăсем пĕтĕмпе противникăн 56.000 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Пирĕн войскăсем Тацинская районĕнче аэродромсем çинче нимĕçсен 300 самолетне тата Тацинская станцинче 50 самолет тиенĕ эшелонне тытса илнĕ.

Декабрĕн 16-мĕшĕпе 26-мĕшĕ хушшинчи çапăçусенче пирĕн войскăсем пĕтĕмпе çакăн чухлĕ трофейăсем тытса илнĕ: самолетсем — 351, танксем—178, орудисем — 1.927, минометсем — 850, огнеметсем — 370, противотанковăй пăшалсем — 690, винтовкăсем — 56.000, винтовка патронĕсем — 30 миллион ытла, мотоциклсем — 1.500, лавсем — 1.150, боеприпассемпе хĕçпăшалсен тата продовольстви[illegible]н склачĕсем — 310, чугунçул вагонĕсем — 920, паровозсем — 21.

Çав [illegible] хушшинчех пĕтерсе тăкнă: самолетсем — 117, танксем — 172, тĕрлĕ калибрлă орудисем — 268.

Декабрĕн 25-мĕшĕнче çапăçу хирĕнче противникăн 3.000 яхăн салтакĕпе офицерĕ вилсе юлнă.

II. Пирĕн во[illegible]дран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре [illegible] туса пыраççĕ

Декабрĕн 26-мĕшĕнче Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем противника малалла хĕссе пынă, 10—20 километр малалла кайнă та НОВОАКСАЙСКИЙ, ГЕНЕРАЛОВСКИЙ, КАНДАУРОВ, ШЕСТАКОВ, АНТОНОВ, КРУГЛЯКОВ, РОМАШКИН, ЧИЛЕКОВ ятлă халăх пурăнакан пунктсене йышăнса илнĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Вăрман ĕçĕсен хĕллехи планне срокчен тултарар!

Çĕршыва фронт умĕнчи ответлăха туйса, пирĕн республикăри вăрман промышленность работникĕсемпе колхозниксем вăрман хатĕрлевĕнче тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем вăрман хатĕрлевĕ тĕлĕшпе государство панă чылай заданисене тултарчĕç. Чугунçул транспорчĕ валли кăçалхи çулăн пĕрремĕш çуррипче вутă хатĕрлемелли задание срокчен пурнăçа кĕртрĕç, иккĕмĕш çурçулти задани те ăнăçлăн пурнăçа кĕрсе пырать.

Хуласемпе предприятисенчи ĕççынисем хăйсене валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе те кăçал сахал мар ĕçлерĕç.

Анчах та республикăри вăрман хатĕрлевĕн хăвăртлăхĕ çителĕклĕ теме çук-ха. Нумай пулмасть пулса иртнĕ ВКП(б) Обкомĕн XIII пленумĕ Вăрман промышленность Халăх Комиссариачĕ, хăйĕн хăшпĕр ўсĕмĕсене пула, йăпăланса ларма пăхни палăрать, вăрман хатĕрлевне ертсе пырассине вăйсăрлатрĕ, тесе палăртса хăварчĕ. Вăрман хатĕрлекен организацисем экстракт промышленносĕ валли чĕртавар тăратмалли плана тултараймарĕç. Элĕк, Первомайски, Çĕрпў, Комсомольски, Сĕнтĕрвăрри тата Октябрьски райсовет исполкомĕсем вăрман хатĕрлевĕ валли ĕç вăйĕ тăратасси çине тимсĕррĕн пăхнă пирки ĕç повинноçĕ йĕркипе лашасемпе çынсене уйăрса памалли плана тултараймарĕç.

Вутта хатĕрлени ĕç пĕтмест, ăна тата турттарса тухас пулать. Хатĕрленĕ вутта турттарас тĕлĕшпе вара Кувакински, Ишлей, Куславкка, Канаш тата Сĕнтĕр районĕсем уйрăмах юлса пыраççĕ. Çак районсенчи парти тата совет органĕсем вутта вăхăтра турттарас тесе тивĕçлĕ мерăсем йышăнман. Çавăнпа унти промышленноçпа коммуналлă предприятисен, шкулсемпе больницăсен вутă сахал.

Вăрман хатĕрлевĕнче рабочисем йышлăн ĕçлеççĕ пулин те, ВКП(б) райкомĕсемпе леспромхозсенчи парторганизацисем вĕсен хушшинче массăллă ăнлантару ĕçне çителĕксĕр туса пыраççĕ.

Вăрман промышленность Халăх Комиссариачĕ, вырăнти топливо промышленноçĕн Управленийĕ, çавăн пекех вăрман хатĕрлекен организацисен руководителĕсем те рабочисен пурнăçпа ĕçлĕ условисене лайăхлатассишĕн пек тĕрăшмаççĕ. Хĕрлĕ Чутайри механизациленĕ вăрман пунктĕнче, Атăл леш енчи леспромхозра рабочисем пурăнмалли çуртсене, мунчасене, оборудованисене [illegible] хатĕрлемен.

Вăрман хатĕрлевĕ — партипе совет органĕсен, вăрман хатĕрлекен организацисен пĕтех те пысăк задачи. ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ вăрман ĕçĕнчи çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерме хушса хăварчĕ тата çак ĕçе вăйлатмалли мероприятисене палăртрĕ.

Чи малтанах, райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсен хĕллехи вăхăтра вăрманта ĕçлеме кирлĕ ĕç вăйне плана палăртнă чухлех уйăрса памалла тата вĕсене пурне те ĕçе кăлармалла. Вăрман промышленность Халăх Комиссариачĕн тата вырăнти топливо промышленноçĕн Управленийĕн вăрмана пынă ĕç вăйне сезонра задание тултариччен çирĕплетсе хăвармалла. Çавăнпа та вĕсен вăрманта ĕçлекенсен пурнăçпа ĕçлĕ условийĕсене юсассишĕн, мунчасене, дезкамерăсене пĕр чарăмсăр ĕçлеттерессишĕн, бараксенчи санитари йĕркине çирĕплетессишĕн кашни кун тăрăшас пулать. Райсовет исполкомĕсемпе парти райкомĕсен вăрманта ĕçлекен лашасемпе çынсем валли колхозсенчен фураж, апат-çимĕç тата ытти япаласем çителĕклĕ таран парса тăрассине организацилемелле, вăрман ĕçĕнчен пăрăнакансене хирĕç кĕрешмелле.

Вăрман хатĕрлекен организацисем умĕнче те татăклă задачăсем тăраççĕ. Вĕсен вăрманта ĕçлекенсен ĕç тухăçлăхне ўстерес, ĕç дисциплинине çирĕплетес тĕлĕшпе уйрăмах тимлĕн ĕçлемелле. Ку тĕлĕшпе вĕсен стахановецсемпе опытлă рабочисен ĕç мелĕсемпе мĕнпур рабочисене паллаштармалла, вăрман касакансемпе турттаракансем хушшинчи социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ямалла, кулленхи нормăна кашни рабочипе работница тултармалла тăвас пулать. Ĕç хатĕрĕсене çителĕклĕ тупса парас, вĕсене лайăхлатса пырас тĕлĕшпе те вăрман ĕçĕнчи ертсе пыракан работниксен пуçаруллă та тавçăруллă пулмалла.

Хальхи вăхăтра пирĕн леспромхозсенче механизациленĕ транспорт уйрăмах япăх ĕçлет. ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ механизациленĕ транспорт ĕçне тĕпренех лайăхлатас тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнма хушса хăварчĕ.

Пленум çавăн пекех ВКП(б) райкомĕсене вăрманта ĕçлекенсем хушшинчи партиллĕ-политикăллă тата агитациллĕ-массăллă ĕçе вăйлатма хушса хăварчĕ. Çакна тума вăрман хатĕрленĕ çĕре коммунистсемпе комсомолецсене агитаторсемпе вулавçăсем пулса ĕçлеме ярас пулать. Кашни леспромхозпа мехлесопункт çумĕнче агитаторсен çирĕп коллективĕ пулмалла, агитаторсемпе инструктивлă канашлусем тăтăшах ирттермелле, вĕсене кирлĕ литературăсене тупса памалла. Сталин юлташ хăйĕн докладĕпе приказĕнче лартнă историллĕ задачăсемпе вăрманта ĕçлекенсене пурне те тĕплĕн паллаштармалла, çапла вĕсене нормăна ирттерсе тултарма хавхалантарса пымалла.

Пленум комсомол Обкомне, çавăн пекех парти райкомĕсене те, вăрманта ĕçлекен комсомолецсем çине ытларах çавăрăнса пăхма, вĕсен ĕçне лайăхрах ертсе пыма хушса хăварчĕ. Вăрман ĕçĕнчи комсомолецсемпе çамрăксем — социализмлă ăмăртăва пуçарса ертсе пыракансем пулччăр.

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

I.

ДОНĂН ВĂТАÇĔРĔНЧИ РАЙОНРА ПИРĔН ВОЙСКĂСЕМ МАЛАЛЛА НАСТУПЛЕНИ ТУСА ПЫРАÇÇĔ

Декабрĕн 25-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, Донăн вăтаçĕрĕнчи районра малтанхи еннеллех ăнăçлăн наступлени туса пырса, халăх пурăнакан вуншар пункта, çав шутра СИСЕНКОВО, МАРКОВКА (КАНТЕМИРОВКĂРАН хĕвеланăçнерехре), БУГАЕВКА, РОССОХОВАТЫЙ, БОНДАРЕВКА, ГРЕКОВО, ФОМИНКА, КУТЕЙНИКОВ ятлă пысăк пунктсене тата МАЛЬЧЕВСКАЯ ятлă район центрĕпе пысăк чугунçул станцине йышăнса илнĕ.

Декабрĕн 25-мĕшĕнче кăç пулнă тĕле тыткăна илнисен хисепĕ 7.500 çын хутшăннă. Декабрĕн 16-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинчи çапăçусенче пирĕн войскăсем мĕн пурĕ противникăн 49.700 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Декабрĕн 16-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинчи çапăçусенче пирĕн войскăсем çакăн чухлĕ трофея тытса илнĕ: танксем — 172, орудисем — 1.877, винтовкăсем — 54.000, радиостанцисем — 82, мотоциклсем — 1.177, лавсем — 1.115, лашасем — 6.783, боеприпассен, хĕçпăшалсен тата продовольствин склачĕсем — 97.

Çакăн чухлĕ пĕтерсе тăкнă: самолетсем — 107, танксем — 133, тĕрлĕ калибрлă орудисем — 251.

Декабрĕн 24-мĕшĕнче противник çапăçу хирĕнче хăйĕн салтакĕсемпе офицерĕсен 7.000 виллине ытла пăрахса хăварнă.

II.

СТАЛИНГРАДРАН КĂНТĂР-ХĔВЕЛАНĂÇНЕРЕХРЕ ПИРĔН ВОЙСКĂСЕМ ПРОТИВНИКА ТЕПĔР ХУТ ПЫРСА ÇАПНĂ

Сталинград патĕнче пирĕн войскăсем çавăрса илнĕ хăйĕн группировкине çăлса хăварас тесе, противник Котельниковăран çурçĕреллерехри районра 6 дивизи, çав шутра 3 танковăй дивизи пухса тăратнă та декабрĕн 12-мĕшĕнче пирĕн войскăсене хирĕç наступлени пуçласа янă. Çапăçусен малтанхи кунĕсенче, хăйĕн вăйĕсем пирĕннинчен пăртак йышлăрах пулнипе усă курса, противник пирĕн чаçсене каялла чакарнă та халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Оборонăра тăрса вăйлăн çапăçса, пирĕн войскăсем противникăн вăйĕсене хавшатнă. Унтан вара хăйсем контрнаступлени пуçласа янă; противник хирĕç тăнине сирсе ярса, вĕсем ăна кăнтăр-хĕвеланăçнелле 20—25 километр аякка хăваласа янă. Пирĕн войскăсем НИЖНЕ-КУМСКИЙ, ВАСИЛЬЕВКА, КАПТИНКА, ПАРИЖСКАЯ КОММУНА, БИРЗОВОЙ, ВЕРХНЕ-КУМСКИЙ, 2-МĔШ ЖУТОВ тата КЛЫКОВ ятлă халăх пурăнакан пунктсене çĕнĕрен йышăнса илнĕ.

Декабрĕн 12-мĕшĕпе 24-мĕшĕ хушшинче пирĕн войскăсем çакăн чухлĕ пĕтерсе тăкнă: самолетсем — 263, танксем — 300 çити, тĕрлĕ калибрлă орудисем — 160.

Çав вăхăт хушшинчех противникăн 9.000 салтакĕпе офицерне çити вĕлернĕ.

III.

ÇУРÇĔР КАВКАЗРА ПИРĔН ВОЙСКĂСЕМ НАСТУПЛЕНИ ТĂВАÇÇĔ

Декабрĕн 25-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри районра малалла наступлени туса пынă. Декабрĕн 22-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинчи çапăçусенче пирĕн войскăсем, 25 — 30 километр малалла куçса, КРАСНОГОР, БЕЛОРЕЧЕНСКАЯ, ДИГОРА, КАРМАН—СИНДЗИКАУ, МОСТИДЗАХ, ДУР—ДУР ятлă халăх пурăнакан пунктсене йышăнса илнĕ.

Декабрĕн 22-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче пирĕн войскăсем çакăн чухлĕ трофея тытса илнĕ: танксем — 32, орудисем — 30, пулеметсем — 83, винтовкăсем — 1.000 ытла, винтовка патронĕсем — 300 пин тата снарядсемпе минăсем нумай тытса илнĕ.

Çакăн чухлĕ пĕтерсе тăкнă: танксем — 36, орудисем — 19, пулеметсем — 180, автомашинăсем — 365.

Çав вăхăт хушшинче противникăн 2.000 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Украинăн КП(б) Центральный Комитетне
Украина ССР-ĕн Верховный Совет Президиумне
Украина ССР-ĕн Халăх Комиссарĕсен Советне

Украинăра Совет влаçĕ туни 25 çул тултарнă кун Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕ тата ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Украина Советлă Социализмлă Республикин рабочийĕсене, колхозникĕсене тата интеллигенцине тăванла салам яраççĕ.

Чĕрĕк ĕмĕр каялла Украина халăхĕ, большевиксен партийĕ ертсе пынипе, Украина халăхне пусмăрлакансен влаçне сирпĕнтерсе ярса, чăн-чăн халăх влаçĕ туса хучĕ. Украина халăхĕ 1918 çулта хăйĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне хўтĕлесе пырса тата аслă вырăс халăхĕ тăванла пулăшса пынипе нимĕç оккупанчĕсене çапса аркатрĕ те Украина çĕрĕ çинчен хăваласа ячĕ.

Совет влаçĕ пулнăранпа Украина халăхĕ культурăллă та пуян пурнăç туса хучĕ. Украинăра çĕршер çĕнĕ пысăк заводсемпе фабрикăсем, темиçе çĕр машинно-тракторнăй станци, пиншер шкулпа больница, пиншер клубпа театр туса хунăччĕ.

Украина Совет влаçĕ вăхăтĕнче малта тăракан, пысăк тухăçлă ялхуçалăхлă çĕршыв пулса тăчĕ. Украинецсен наци культури калама çук вăйлăн ўссе чечекленсе кайрĕ. Украинецсен çĕрĕсем историре пĕрремĕш хут пĕрлĕхлĕ Украина государствине пĕрлешрĕç.

Нимĕçсен фашистла бандисем пирĕн çĕршыва килсе кĕни Украина халăхĕн мирлĕ, пултаруллă ĕçне татса хучĕ. Гитлеровецсем Совет Украининчи вуншар хулана, çĕршер яла аркатса тăкрĕç, Украина халăхĕн наци культурин йышлă памятникĕсене вараларĕç тата пĕтерсе хучĕç, украинец арçынĕсемпе хĕрарăмĕсене тата ачисене çĕршер пин çынна асаплантарса вĕлерсе пĕтерчĕç.

Çынçиен Гитлер Украинăна нимĕç империалисчĕсен колонийĕ тума шухăш тытнă, ирĕке юратакан Украина халăхне чуралантарма тата нимĕçе кăларма шут тытнă. Апла пулас çук! Украина халăхĕн шанчăклă ывăлĕсемпе хĕрĕсем Хĕрлĕ Çарăн ретĕсенче хастарлăн çапăçаççĕ, совет тылĕнче хăйсене шеллемесĕр ĕçлеççĕ, партизансен отрячĕсенче геройла кĕрешеççĕ, Тăван çĕршыва оккупантсенчен ирĕке пĕтĕмпех кăларассине хатĕрлесе пыраççĕ.

Украина совет çĕршывĕ пулнă, малашне те çавăн пекех пулĕ! Кăнтăр-хĕвеланăç фронтĕнчи чаçсем хăйсем ирĕке кăларнă Украина ялĕсене пырса кĕчĕç ĕнтĕ. Украинăра, нимĕç вăрă-хура хĕсĕн тылĕнче, халăхăн ирĕке тухасшăн пыракан кĕрешĕвĕ сарăлса вăйлансa пытăр.

ВКП(б) Центральный Комитечĕ тата СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çакна хытă шанса тăраççĕ: Украинăри совет патриочĕсем Совет Союзĕнчи ытти халăхсемпе пĕрле хăйсен тăван çĕршывĕ умĕнчи тивĕçне пурнăçа кĕртрĕç.

Сывă пултăр Украина Советлă Социализмлă Республики!

Нимĕç оккупанчĕсене — вилĕм!

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тата Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕ хушнипе

И. СТАЛИН.
В. МОЛОТОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Декабрĕн 25-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерў

Декабрĕн 25-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Донăн вăтаçĕрĕнчи районра ăнăçлăн малалла наступлени туса пырса, халăх пурăнакан вуншар пункта, çав шутра Сисенково, Марковка (Кантемировкăран хĕвеланăçнерехре), Бугаевка, Россоховатый, Бондаревка, Греково, Фоминка, Кутейников ятлă пысăк пунктсене тата Мальчевская ятлă район центрĕпе пысăк чугунçул станцине йышăнса илнĕ.

Çак кунсенче пирĕн войскăсем Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре контрнаступлени тума пуçланă та, противник хирĕç тăнине сирсе ярса, Нижне-Кумский, Васильевка, Каптинка, Парижская Коммуна, Бирзовой; Верхне-Кумский, 2-мĕш Жутов, Клыков ятлă халăх пурăнакан пунктсене çĕнĕрен йышăнса илнĕ.

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн войскăсем, наступлени туса пырса, халăх пурăнакан пысăк пунктсене—Красногор, Белореченская, Дигора, Карман — Синдзонау, Мостидзах; Дур-Дур ятлă пунктсене йышăнса илнĕ.

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

Баренц тинĕсĕнче пирĕн карапсем противникăн 7 пин тонна водоизмещениллĕ карапне путарнă.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă районĕсенче пирĕн чаçсем, штурмлакан отрядсене уйăрса кĕрешсе, противникăн укреплениййĕсене çавăрса илсе пĕтерсе пынă. Пĕр завод районĕнче уйрăмах вăйлă çапăçусем пыраççĕ, унта уйрăм çуртсемшĕн пыракан çапăçусем час-часах штык вĕççĕн тăрса çапăçнипе вĕçленеççĕ. Минометсемпе персе, нимĕçсен боеприпассем хунă складне сирпĕнтерсе янă. Противникран тытса илнĕ çуртсемпе блиндажсенче совет боецĕсем нимĕçсен минăласа хăварнă темиçе виллине тупнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре противникпа сайра-хутран хирĕç-хирĕç персе тăнă. Пирĕн артиллери нимĕçсен 26 дзочĕпе блиндажне ишĕлтернĕ, миномётсен 2 батарейине тата противникăн 5 пулеметнăй точкине пусарса лартнă. Пирĕн разведка тăвакан отряд нимĕçсем тăракан вырăна кĕрсе кайнă та гитлеровецсене пĕр ротăна çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Противник вăйлăн хирĕç тăнине сирсе ярса тата ăна пысăк çухатусем тўстерсе, совет чаçĕсем халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Н-ски чаçăн боецĕсем кун каçа тăшманăн 26 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă тата 400 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Донăн вăтаçĕрĕнчи районра пирĕн войскăсем каялла чакакан противника хăваласа пынă. Пĕр районра пирĕн чаçсем противникăн çавăрса илнĕ группировкине аркатса тăкнă. Нимĕçсен 4 пин салтакĕпе офицерне çити тыткăна илнĕ тата трофейăсем нумай тытса илнĕ. Халăх пурăнакан хăшпĕр пунктра противник хирĕç тăма хăтланнă, контратакăсем тунă. Пирĕн боецсем гитлеровецсем хирĕç тăнине сирсе янă та, малалла куçса, халăх пурăнакан вуншар пункта йышăнса илнĕ. Пĕр участокра Н-ски гвардейски часть противника халăх пурăнакан икĕ пысăк пунктран хĕссе кăларнă. Çав çапăçура тăшманăн пехотнăй полкне çапса аркатнă, 78 оруди тата ытти трофейăсем тытса илнĕ. Тепĕр участокра гитлеровецсем пирĕн чаçсем хĕссе пынипе каялла чакнă, юсавлă йывăр орудисем, нумай снарядсем, автомашинăсем, мотоциклсем тата япала склачĕсемпе продовольстви склачĕсем пăрахса хăварнă.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсен пĕр пайĕ çавăрса илнĕ нимĕç гарнизонĕсене пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă тата противникăн контратакисене сирсе тăнă. Великие Луки районĕнче Н-ски чаçăн боецĕсем вăйлăн çапăçнă хыççăн тăшман оборонин вăйлă тĕреклетнĕ узелне йышăнса илнĕ, çав узел вăл халăх пурăнакан пĕр пысăк пункт патне пымалли вырăнсене хўтĕлесе тăнă. Çав çапăçусенче нимĕçсем чĕрĕ вăйпа техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тўснĕ. Ржевран хĕвеланăçнерехри районра противник, хăйĕн пехотипе танкĕсене пĕр çĕре пухса тăратса, пирĕн пĕр соединенин позицийĕсене атакăланă. Икĕ кун хушши хаяр çапăçусем пынă. Малтан нимĕçсем пирĕн чаçсене каялла чакарса халăх пурăнакан пункта йышăнса илнĕ. Тепĕр кунне пирĕн боецсем гитлеровецсене хирĕç пырса çапса вĕсене хăйсен малтанхи позицийĕсем патне хăваласа янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 1.000 виллине çити выртса юлнă. Нимĕçсен 47 танкĕпе бронемашинине тата 18 орудине пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн войскăсем малалла наступлени туса пырса нимĕçсене халăх пурăнакан темиçе пунктран хăваласа кăларнă. Пирĕн чаçсем малалла куçса пырса нимĕçсен 32 танкне, 30 орудине, 300 пин винтовка патронне, çавăн пекех тата снарядсемпе минăсем нумай тытса илнĕ. Противник пысăк çухатусем тўсет. Гитлеровецсем каялла чакнă чухне çулсене тата халăх пурăнакан пунктсем патне пымалли вырăнсене минăласа хăвараççĕ. Шустер юлташ ертсе пыракан саперсем, пехотăпа танксем валли çул уçса пырса, кун каçа пин ытла противотанковăй минăна сиенсĕрлетнĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн снайперсем икĕ кун хушшинче 242 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Пирĕн артиллери 18 дзота тата 4 наблюдательнăй пункта вĕсенче тăнă нимĕç салтакĕсемпе пĕрлех пĕтерсе тăкнă.

* * *

Украинăри районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ пĕр пысăк хулара тăракан нимĕç гарнизонне пырса тапăннă. Партизансем нумай гитлеровеца вĕлернĕ тата трофейăсем тытса илнĕ. Тытса илнĕ продовольствин пысăк пайне халăха валеçсе панă. Украинăри партизансен тепĕр отрячĕ чугунçул çинчи 4 пысăк кĕпере сирпĕнтерсе янă. Чугунçулăн çав участокĕнче вара поездсем çўреме пăрахнă.

* * *

Декабрĕн 11-мĕшĕпе 14-мĕшĕ хушшинче, виçĕ кун хушшинче, нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Калинин облаçĕпе Витебск облаçĕнче Ерхи, Ключ, Мадиновка, Труд, Шарино, Задорожье, Плетни, Вязовка, Моисеевка тата ытти ялсене те çĕмĕрсе, çунтарса янă. Нимĕçсем мĕнпурĕ халăх пурăнакан 50 пункта çити çунтарса янă. Гитлерла бандитсем халăх пурăнакан пунктсене çунтарнă чухне хресченсене массăллăн çаратса тата вĕлерсе пынă.

Декабрĕн 26-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерў

Декабрĕн 26-мĕшĕ ыран тенĕ чухне çĕрле пирĕн войскăсем Сталинград районĕнче, Центральнăй фронтра, Донăн вăтаçĕрĕнчи районра тата Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре малтанхи еннеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă районĕнче пирĕн войскăсем противникăн дзочĕсемпе блиндажĕсене çавăрса илсе пĕтерсе пынă. 19 дзота тата 57 блиндажа ишĕлтернĕ, тытса илнĕ. Н-ски чаçăн боецĕсем нимĕçсен пĕр пысăк завода йышăнса тăнă группировкине çавăрса илсе пĕтерсе тăкнă. Çак çапăçура противникăн 500 салтакĕпе офицерне çити вĕлернĕ. 22 пулемет, 180 винтовка, 400 граната тата 20 пин патрон ытла тытса илнĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем хăйсен позицийĕсене тĕреклетнĕ тата противник çине персе тăнă. Тĕрлĕ участоксенче снайперсемпе пулеметчиксем гитлеровецсене пĕр рота таран пĕтерсе тăкнă. Артиллеристсем 2 батарейине, минометсен 4 батарейине тата 7 пулеметнăй точкăна пусарса лартнă. Противникăн боеприпассем хунă складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем малалла наступлени туса пынă. Противник хирĕç тăнине сирсе ярса, вĕсем малалла куçнă. Н-ски гвардейски часть, гитлеровецсен пĕр батальон пехотине тата 10 танкне пĕтерсе тăкса, халăх пурăнакан пĕр пункта йышăнса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем противникпа çапăçса нимĕçсен 600 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă тата тăшманăн 20 танкне, çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Донăн вăтаçĕрĕнчи районра пирĕн войскăсем ăнăçлăн наступлени туса пынă. Н-ски чаçăн боецĕсем халăх пурăнакан пĕр пункта йышăнса илсе, нимĕç пехотине пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем противникăн каялла чакса пыракан войскисен тылне пырса тухнă та тăшманăн 560 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. 14 оруди, 35 пулемет тата тĕрлĕ çар пурлăхĕ тиенĕ обоза тытса илнĕ.

* * *

Центральнăй фронтра Великие Луки районĕнче Н-ски часть нимĕçсен пехотин танксем пулăшса пынипе ту-

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Декабрĕн 26-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

...ĕ атакине сирсе янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 200 яхлли вырттса юлнă. 3 орудие тата минометсен 2 батарейине пĕтерсе тăкнă. Пирĕн боецсем нимĕçсен юсавлă танкне, минометсен батарейине тата 2 орудие тытса илнĕ.

Ржевран хĕвеланăçнерехри районра пирĕн артиллери 16 блиндажпа дзота ишĕлтернĕ тата противникăн пехотине пĕр ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн войскăсем, малалла наступлени туса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Н-ски гвардейски чăсăн подразделенийĕсем пĕр ялшăн çĕрĕпех хаяррăн çапăçнă, çав яла нимĕçсем хирĕç тăмалли хăватлă узел туса хунă пулнă. Гитлеровецсем çав ял патне пымалли вырăнсене тата кашни урама, кашни çурта вăйлăн хÿтĕленĕ. Ирпеле гвардеецсем, противникран айкипе пырса иртсе кайса, вăл хирĕç тăнине сирсе янă. Çав ял патне пымалли вырăнсенче тата унăн урамĕсенче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсен 300 яхлли ытла вырттса юлнă. Пирĕн боецсем нимĕçсенчен 6 танк, 21 оруди, 14 трактор, 28 пулемет, 600 винтовка тата патронсем, снарядсем, минăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Украинăри партизансен отрячĕ, Харьков облаçĕнче кĕрешекенскер, нимĕçсен пехотнăй батальонĕн штабне сасартăк пырса тапăннă. Совет патриочĕсем штабри 11 офицера тата тăшманăн 70 салтакне пĕтерсе тăкнă. Паха документсемпе трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Гитлеровецсем совет войскисем Донăн вăтаçĕрĕнчи районра наступлени тунине темиçе кун хушшинче Германи халăхĕнчен пытарса тăма хăтланнă. Анчах та «шилăна михĕре пытарса усраймăн» тессĕ ваттисем. Нимĕçсен фашистла войскисем Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра пысăк поражени тÿснине уйрăмах пытарса тăма май килмен. Фашистсен суеçĕсем калама тытăннă. Берлинри радио çапла пĕлтернĕ: «Пирĕн Дон шывĕн вăтаçĕрĕнчи участокра кĕрешекен войскăсем хальхи вăхăтра пулса иртекен операцисене тахçан малтанах хатĕрлесе хунă. Ĕç мĕнле пынине пĕлекен çар çыннисем хальхи лару-тăрупа хавасланах килĕшеççĕ», тенĕ. Нимĕçсем хыççăн итальянецсем те çаплах калаççĕ. Римри радио çапла пĕлтернĕ: «Вырăс войскисем çитĕнÿсем тукаларĕç, анчах та çапла калама пулать: «Вĕсем те хăйсен операцийĕсене Германи командованийĕ малтан шухăшласа хунă план тăрăх туса пыраççĕ», тенĕ.

Çапла ĕнтĕ, нимĕçсемпе вĕсен итальянец хÿрешкисем çапла калаççĕ:

Совет войскисем, Дон çинче гитлеровецсене аркатса пĕтерсе пырса, Германи командованийĕ шухăшласа хунă план тăрăх ĕçлеççĕ иккен; нимĕçсен çар çыннисем Хĕрлĕ Çар декабрĕн 16-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче Донăн вăтаçĕрĕнчи районра нимĕçсен фашистла çарĕн 50 пин салтакĕпе офицерне тыткăна илнипе тата гитлеровецсен вуншар пин салтакĕпе офицерне тата çар техникине питĕ нумай пĕтерсе тăкнипе питĕ кăмăллă пулнă иккен.

Гитлеровецсен пуçлăхĕсем суйма тата элеклеме мĕнтери ăста пулнине пурте пĕлеççĕ. Анчах та тĕнче нимĕçсемпе итальянецсен правительствисенчен тухакан çавтери суя та ăссăр сăмаха халиччен илтменччĕ-ха. Çавăн пек аташни (ухмаха ернĕ çынсен çуртĕнче çеç килĕшÿллĕ пулса тăраканскер) Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра нимĕç войскисене питех те пысăк çухатусем тÿстернĕ пирки гитлерла пуçлăхсем йăлтах çухалса кайнине кăтартать.

Танксен хăватлă колоннисене тăвар

1.550.000 тенкĕ пухнă

СĔНТЕРВĂРРИ, декабрĕн 26-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсенче те, хулара та танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума укçа пухас ĕç анлăн саралса кайрĕ. Районри ĕççыннисем танксен колоннине тума государство банкне паянхи куна 1.550.000 тенкĕ укçа хывнă. Юнтаба ялсоветĕнчи Киров ячĕпе тăракан, Банновски ялсоветĕнчи «Шордан» ялхуçалăх артелĕсем танксен колоннине тума çĕршер пин тенкĕ, Новинскри Сталин ячĕпе тăракан, Банновски ялсоветĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозсем 70-шер пин тенкĕ укçа панă. «Волна» колхоз председателĕ Ефремов юлташ танксен колоннине тума хăй пĕччен 2.000 тенкĕ панă.

Танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума укçа пухас ĕçе хулари килхуçи арăмĕсем те активлăн хутшăнчĕç. Вĕсем танксем тума 5.000 тенкĕ, Хĕрлĕ Çар командирĕсен арăмĕсем 2.000 тенкĕ пухса панă. Танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума укçа пухас ĕç малалла пырать.

Н. РОСТОВЦЕВ.

Район 1.431.000 тенкĕ пухнă

КАЛИНИНО, декабрĕн 25-мĕшĕ. («Чăваш Коммуни» корр., телефонпа). Енерхи кун тĕлне государство банкĕн районри отделенине колхозниксемпе колхозсем танксен «Колхсзник Чувашии» колоннине тума 1.431.000 тенкĕ укçа хывнă. Ленин ячĕпе тăракан колхозăн членĕсем çак ĕç валли 61.000 тенкĕ хывнă.

Анчах танксен колоннине тума укçа пухас ĕçе тивĕçлипе организацилемен колхозсем те пур-ха. «Комсомолец», «Молния», «Броневик» тата Каганович ячĕпе тăракан колхозсем паянхи кунччен çак ĕç валли пĕр пус укçа та пухман. ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ кун çинчен пĕлеççĕ, анчах нимĕнле мера та йышăнмаççĕ.

Массăллă-ăнлантару ĕçне анлăн сарса, районри кашни колхозникпе колхозницăна танксен колоннине тума укçа пухас ĕçе явăçтарма тăрăшмалла.

Вĕренекенсем те ашшĕ-амăшĕсенчен юлмаççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Октябрьскинчи вăтам шкулта вĕренекенсемпе пионерсем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 900 тенкĕ, Кудемерти туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем 500 тенкĕ, Энтри-Пасарĕнчи туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем 400 тенкĕ укçа пухрĕç.

В. ТРОФИМОВ.

Ытлашши тырра— Хĕрлĕ Çар фондне

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, декабрĕн 25-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсенче Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз колхозникĕсем хăйсен ытлашши тыррине Хĕрлĕ Çар фондне хывни çинчен тата вĕсем хăйсен примерне йышăнса илме республикăри мĕнпур колхозниксене чĕнсе каланине сÿтсе яваççĕ. «Родина» колхоз членĕсем колхозра тÿрĕ кăмăлпа ĕçлесе илнĕ тыррăн пĕр пайне Хĕрлĕ Çар фондне хывма кăмăл турĕç. Унта пĕр кун хушшинче çак ĕç валли 120 пăт тырă пухăнчĕ. Колхоз председателĕ А. Иванов юлташ 6 пăт, ферма заведующийĕ А. Капитонов юлташ 7 пăт пачĕç.

Ку ĕç районри ытти колхозсенче те пуçланчĕ.

„Марс" колхоз членĕсен примерĕпе

КАЛИНИНО. Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз членĕсен примерĕпе Сăкăтри Буденный ячĕпе тăракан колхозри колхозниксем те Хĕрлĕ Çара тырă парса пулăшаççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем государство умĕнчи парăмсене парса татнă хыççăн хăйсенчен ытлашши тырра Хĕрлĕ Çарăн тырă фондне хываççĕ. Вĕсем Хĕрлĕ Çарăн тырă фондне пурĕ 220 пăт тырă хучĕç. Колхозăн бригадирĕсем кашниех Хĕрлĕ Çара пĕрер центнер тĕштырă панă. Колхозница-стахановка И. Лукина, колхоз счетоводĕ С. Григорьев юлташсем те Хĕрлĕ Çарăн тырă фондне пĕрер центнер тырă хучĕç.

Г. МАТВЕЕВ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли—ăшă тумтирсем

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, декабрĕн 25-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри ĕççыннисем отечественнăй аслă вăрçăн фронтĕсенчи хăйсен юлташĕсемшĕн тăванла тăрăшаççĕ. Юлашки икĕ уйăх хушшинче вĕсем хамăрăн мухтавлă воинсем валли 24 кĕрĕк гимнастерка, 130 мăшăр çăматă, 9 фуфайка, 104 алшăлли, 30 простыня тата ăшă тумтирсем хатĕрлеме 628 тир, 648 килограмм çăм пухнă. Боецсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕç уйрăмах «Красное Сормово» колхозра ăнăçлă пулса пырать. Унта çак вăхăт хушшинче пурĕ 62 тир, 21 килограмм ытла çăм пухнă.

Р. ВАСИЛЬЕВА.

КУЛЛЕН КИРЛĔ ТАВАРСЕНЕ ЫТЛАРАХ ТУСА КĂЛАРАР

А. МАТВЕЕВ

ЧАССР Совнаркомĕн Председателĕ

Вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕ ĕçрынкисем валли апат-çимĕç продукчĕсем тата куллен кирлĕ таварсем туса кăларнă çĕрте яланах пысăк вырăн йышăнса тăнă. Халĕ, отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче, вĕсем татах та пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Мĕншĕн тесен халĕ вĕсем оборонăлла заказсене пурнăçлани вăхăтрах халăха куллен кирлĕ япаласене вырăнти чĕртавартан туса кăларма тивĕçлĕ.

Пирĕн партипе правительство вырăнти тата кооперативлă промышленноçсен ĕçĕпе яланах интересленнĕ.

Сталин юлташ вăрçă вăхăтĕнчи пек ĕçлеме, фронта мĕн кирлине пурне те парса тăма чĕнни вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕн работникĕсен ĕçри çĕкленĕвне пуçарчĕ. Çак çĕкленĕвĕн паха тивлечĕсене эпир республикăри чылай предприятисемпе артельсенче куратпăр. Тĕслĕхрен, Октябрьски районри Караньялĕнчи «Труд» артелех илер. Çак артель коллективĕ Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне 4-мĕш уйăх ĕнтĕ алăран вĕçертмест.

Артель çавăн пек ăнăçлăн ĕçлени унăн председателĕ Мокеев юлташ артель членĕсемшĕн куллен тăрăшнинчен килет. Артель членĕсем пурте ăваттерсене вырнаçнă, лайăх ĕçлекен столовăйĕнче апатланаççĕ.

Унпа пĕрлех артельре ĕçе тĕрĕс организациленĕ, социализмлă ăмăртăва анлăн сарса янă. Ăмăртăва рабочисенчен кашниех хутшăннă тата уйрăм обязательствăсем илнĕ. Çав обязательствăсем пурнăçа мĕнле кĕрсе пынине пĕрмаях тĕрĕслесе тăраççĕ, тĕрĕслÿ результачĕсемпе пур рабочисене те паллаштараççĕ. Тăтăшах пулса иртекен производствăллă канашлусенче кулленхи, эрнĕ кунри тата уйăхри ĕç итогĕсене пăхса тухаççĕ, малта пыракан рабочисен ĕç мелĕсене сÿтсе яваççĕ. Çапла туни рабочисен ĕç тухăçлăхне ÿстерме, юлса пыракансене лайăх ĕçлекенсемпе танлаштарма пулăшать. Рабочисем Д. Григорьев, Б. Соколова, А. Соомрэ юлташсем хăйсен нормисене кунсерен 300—400 процент тултараççĕ. Социализмлă ăмăртура уйрăмах палăрнă нумай рабочисене Чăваш республикин правительстви тав тунă тата укçан премиленĕ.

Мокеев юлташ артельри учетпа отчет ĕçĕпе те хытă интересленет. Çакă вăл укçа-тенке, чĕртавара перекетлеме, таварăн хăйне ларакан хакне чакарма пулăшать. Артель кăçалхи 11 уйăх хушшинче 84 пин тенкĕ перекетленĕ.

Артель колхозниксенчен 12 çурт, 81 çĕвĕ машини юсаса илнĕ, 91 çынна пысăк ĕçе вĕрентсе çитернĕ, пачах та çĕнĕ япаласем туса кăларма пуçланă. Ĕçе çапла организациленине пула артель кăçалхи планран иртерсе 742 пин тенкĕлĕх продукци панă, çулталăкри ĕçсен планне 181 процент тултарнă, васкавлă заданисене лайăх пурнăçа кĕртнĕ.

1942 çулта çавăн пекех Канашри «Авангард» артель (правлени председателĕ Васильев юлташ), Альгешеври «Бассон» фабрика (директорĕ Егоров юлташ), Шупашкарти технотканци фабрика (директорĕ Рохлин юлташ) тата Вăрнарти промкомбинат (управляющийĕ Кузнецов юлташ) лайăх ĕçлерĕç.

Республикăри вырăнти тата кооперативлă промышленноçсен пур предприятийĕсемпе артелĕсем те малта асăннă артельсем пек ăнăçлăн ĕçленĕ пулсан, 1942 çулта планран иртерсе вырăнти промышленность 9 миллион тенкĕлĕх, промысла кооперацийĕ 36 миллион тенкĕлĕх продукци туса кăларнă пулĕччĕ. Анчах та пирĕн вырăнти тата кооперативлă промышленноçсем тĕпрен илсен, начар ĕçлеççĕ-ха. Вырăнти промышленность (апат-çимĕç промышленность халăх комиссариачĕн тата строительство материал промышленность управленийĕн предприятийĕсемпе пĕрле) 1942 çулти ĕçсен планне 11 уйăх хушшинче мĕнпур продукци енĕпе 86 процент, куллен кирлĕ таварсем енĕпе 53 процент çеç тултарчĕ.

Кооперативлă промышленноçĕ (унта промсоюз, древпромсоюз, тарпромсоюз, швейпромсоюз тата коопинсоюз кĕреççĕ) артелĕсем те начар ĕçлеççĕ. Вĕсем çулталăкри плана мĕнпур продукци енĕпе 50,9 процент, куллен кирлĕ таварсем енĕпе 54,8 процент çеç тултарнă.

Вырăнти промышленность предприятийĕсемпе промысла кооперацийĕн артелĕсем ĕççыннисем валли куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине çителĕксĕр вырăнне чакарса пыраççĕ. Халăха питех те кирлĕ япаласене (урапа-çуна, калпак-пичке, сĕтел-пукан, таканасем, пуртăсем, кĕвентесем) ытла та сахал туса кăлараççĕ. Вĕсене тума кирлĕ чĕртаварсене уйăх çĕртен кÿрсе килесси çук, чĕртаварсем хамăр патрах çителĕклĕ. Унсăр пуçне тата вĕсене тума вĕренесси те кирлĕ мар, вĕсене пирĕн чăвашсем авалтанпах тăваççĕ. Çавăнпа та халăха кирлĕ таварсене çителĕклĕ туса кăларманни пĕтĕмпех ертсе пыракан работниксенчен килет, уншăн вĕсем айăплă.

Пирĕн халăх комиссариачĕсем, партин районсемпе хуласенчи комитечĕсем, ĕççынни депутачĕсен Совечĕсен исполкомĕсем вырăнти тата кооперативлă промышленность предприятийĕсемпе артелĕсен ĕçне çителĕксĕр ертсе пыраççĕ. Хăшпĕр райкомсемпе райсовет исполкомĕсем предприятисемпе артельсен ĕçĕпе интересленмеççĕ, вĕсен ĕçри чăрмавĕсемпе кăлтăкĕсем çине тимсĕррĕн пăхаççĕ. Сăмахран, Хĕрлĕ Чутай, Етĕрне, Шăхасан, Первомайски районсенчи промкомбинатсем темиçе уйăх хушши ĕнтĕ руководителсĕр пурăнаççĕ.

Вырăнти промышленность кадрĕсемпе тĕрĕс мар усă курни те партипе совет организацисен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕх пулса тăрать. Хăшпĕр районсенче предприятисемпе артельсен руководителĕсене кирлĕ мар çинчех тепĕр ĕçе куçараççĕ, унти рабочисемпе урăх çĕрте усă кураççĕ. Тĕслĕхрен, Первомайски районри Липовски артелĕн, Вăрнар районĕнчи «Красный кустарь», Йĕпреç районĕнчи «Социализм», «Маяк» тата «Кооплеспром» артельсен руководителĕсем кăçал 4 хутчен улшăннă. Ишлей, Елчĕк райсовечĕсен, Улатăр горсовечĕн исполком председателĕсен вырăнти промышленность енĕпе ĕçлекен заместителĕсемпе тăтăшах урăх ĕçре усă курнă. Çавăнпа вĕсем хăйсен предприятийĕсен ĕçне ертсе пыраймаҫ.

Чылай районсенче тата массăллă ăнлантару ĕçне начар туса пыраççĕ, социализмлă ăмăртăва ертсе пымаççĕ, çак ĕçсем хăйсем тĕллĕнех пулса пырасса шанса лараççĕ.

Халăх комиссариачĕсем, промкооперации союзĕсем хăйсен предприятийĕсене оперативлă ертсе пыма, вĕсен ĕçне тăтăшах тĕрĕслесе тăма тивĕçлĕ. Анчах та хальхи вăхăтра вĕсем хăйсен предприятийĕсене бюрократла ертсе пыраççĕ, кашни предприятийĕн ĕçĕпе уйрăммăн интересленсе вырăнне, ытларах хутсем çырса лараççĕ. Урапа çăвĕ, йывăç подошва, сахăр шывĕ тума вĕренсе çитес ĕç ытла та тăсăлса пырать; поташ тума вара нимпле те вĕренсе çитеймерĕç. Çавна пула супăнь туса кăлармалли плана пурнăçа кĕртеймерĕç.

Промкомбинатсемпе артельсенче ĕçе организацилессине лайăхлатас тĕлĕшпе те нумай ĕçлемелле-ха. Апла пулин те унти рабочисен ĕçне лайăхласси, кашнине уйрăм ĕçе вĕрентесси çине тивĕçлипе çаврăнса пăхмаççĕ. Малашне йывăр ĕçсене машина вăйĕпе тăвасси пирки ытларах шутласа пăхмалла, рабочисене ĕçукçи тавхалланса ĕçлемелле туса тÿлемелле. Çак мероприятисене туса ирттерни кăна предприятисемпе артельсенчи ĕç тухăçлăхне 2—3 хут ÿстерме пултарать.

Çавăн пекех вырăнти тата кооперативлă промышленноçсен предприятийĕсемпе артелĕсене вырнаçтарса тухас, вĕсене специализацилесе пырас, союзлă промышленноçпа вĕсен хушшинчи çыхăнăва аталантармалла, тăвас ыйтусене хальтерех татса парас пулать. Халăх комиссариачĕсемпе промысла союзĕсем вырăнти чĕртаварсемпе, шултăра промышленность производствинчен юлнă япаласемпе усă курас ыйтусене те сÿтсе явса татса пама тивĕçлĕ. Суту-илÿ тăвакан организацисен (Суту-илÿ халăх комиссариачĕн, Чăвашсоюзăн, Росснабсбытăн тата ыттисен те) вырăнти промышленноçпа промысла кооперацине ĕççыннисем валли куллен кирлĕ таварсем, çавăн пекех çĕнĕ изделисем, туса кăларас, вĕсен пахалăхне лайăхлатас ĕçре пулăшса тата интереслентерсе пымалла. Анчах халĕ пирĕн промышленность работникĕсемпе суту-илÿ работникĕсен ĕçри тачă çыхăнăва, ĕçре пĕр-пĕрне пулăшса пынине курма çук-ха.

Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕр, Вăрмар тата ытти райсовет исполком председателĕсем предприятисемпе артельсене ытти ĕçсем хушшинче чăрмав тесе шутлаççĕ, çавăнпа вĕсем çине çавăрăнса та пăхмаççĕ. Вĕсем промкомбинатсем район советне пăхăнса тăнине, вĕсен ĕçĕшĕн райсовет исполкомĕн председателĕ ответлă пулса тăнине манаççĕ. Районсенчи партипе совет руководителĕсен çакна ăнланса илмелле: вĕсем куллен пулăшса тăмасăр промкомбинатсемпе артельсем ăнăçлăн ĕçлеме, хальхи вăхăтри пысăк задачăсене хăйсем тĕллĕн татса пама пултараймаççĕ. Вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕн ĕçĕ çине малашне пирĕн пурин те тимлĕн çаврăнса пăхас пулать, вĕсен ĕçне вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек йĕркелесе ярас пулать.

Вырăнти тата кооперативлă промышленноçсен ĕçри ăнăçлăхне Сĕнтĕрвăрри, Çĕмĕрле, Первомайски, Етĕрне, Вăрнар, Шăмăршă районĕсем, Шупашкар, Канаш, Улатăр хулисем татса параççĕ. Асăннă 6 районпа 3 хула вырăнти промышленность туса кăларнă продукцин 74,2 процентне, промысла кооперации туса кăларнă продукцин 63,2 процентне йышăнса тăраççĕ. Районсемпе хула совечĕсен исполком председателĕсем Маклашкин (Сĕнтĕрвăрри), Носков (Çĕмĕрле), Васильков (Первомайски), Агеев (Етĕрне), Ниткин (Вăрнар), Космовский (Шăмăршă), Климов (Шупашкар), Белоглазова (Канаш) тата Поляков (Улатăр) юлташсем промкомбинатсемпе артельсен ĕçĕсене кашни кун тата оперативлă ертсе пынă пулсан, вĕсен производство [illegible] уйăхсерен тултарса пынă [illegible] республикăри вырăнти промы[illegible]па промысла кооперацийĕн ĕç[illegible] тачĕсем хальхинчен чылай лайăхрах пулнă пулĕччĕç. Асăннă районсемпе хула совечĕсен исполком председателĕсен, ВКП(б) райкомĕсемпе горком секретарĕсен çакна ăнланса илме вăхăт: вĕсен районĕсенчи предприятисемпе артельсем мĕнле ĕçленинчен республикăри вырăнти промышленноçăн ĕçри ăнăçлăхĕ килет.

Çитес вăхăтрах пирĕн çакăн пек мероприятисем туса ирттерес пулать.

Вырăнти промышленность предприятийĕсемпе промысла кооперации артелĕсен çак çулхи ĕçĕсен итогĕсене тĕплĕн пăхса тухса, килес çулхи ĕçсен задачисене палăртмалла. 1943 çулти ĕçсен планĕсенче колхозсене кирлĕ транспорт инвентарĕсене (çунасем, урапасем, кустăрмасем, ут таврашĕсем т. ыт. те) май пур таран ытларах туса кăларма палăртас пулать, çав инвентарьсем колхозсен нушисене тивĕçтермелле туххех пулччăр.

Пур районсенче, халăх комиссариачĕсенче тата промкооперации союзĕсенче те производствăллă-техникăллă канашлусем ирттермелле. Çав канашлусене чи лайăх стахановецсемпе ударниксене хутшăнтарса, 1942 çулти ĕçсен итогĕсене сÿтсе явмалла, 1943 çулти ĕçсен планне тултармалли организациллĕ мероприятисене палăртмалла, çĕнĕ çулти плана малтанхи кунсемпе уйăхсенченех тултарса пымалла тăвас пулать.

Районсенчи партипе совет организацисен предприятисемпе артельсенчи рабочисемпе работницăсем хушшинче политмассăллă ĕçе анлăн сарса ямалла, вĕсене социализмлă ăмăртăва явăçтармалла, илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртме пулăшмалла. Унпа пĕрлех тата предприятисемпе артельсене кирлĕ тургăм вăйĕпе ĕç вăйне çителĕклĕ таран уйăрса памалла. ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсем, хăйсен районĕсенчи предприятисемпе артельсен ĕçри çитменлĕхĕсене вăхăтра сиссе, вĕсене пĕтерме çĕрте активлăн пулăшма тивĕçлĕ.

Халăх комиссариачĕсен, промсоюзсен тата районри организацисен вырăнти тата кооперативлă промышленноçсенчи рабочисен, служащисен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнас пулать.

Çак çулхи декабрĕн 18—19-мĕшĕсенче пулса иртнĕ ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XIII-мĕш пленумĕ вырăнти тата кооперативлă промышленноçсен ĕçĕ çинчен те сÿтсе яврĕ. **Пленум вырăнти промышленность, апат-çимĕç промышленность халăх комиссариачĕсем, промысла союзĕсем, çавăн пекех хăшпĕр районсемпе хуласенчи Совет-сен исполкомĕсем начар ĕçленине хытă критиклерĕ.** Пленум унпа пĕрлех вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕн ĕçне лайăхлатас тĕлĕшри практикăллă задачăсене палăртса хăварчĕ. **Халĕ ĕнтĕ районсенчи партипе совет организацисен задачи çакăнта пулать:** ВКП(б) Обком пленумĕн решенийĕсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешнĕ май, вĕсен вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕн ĕçне тĕпренех вăйлатас пулать, плана уйăхсерен, кварталсерен тата кашни район, кашни предприятипе артель тăрăх тултармалла тăвас пулать.

Ăратлă выльăхшăн

КУКЕÇ. Платкари «Красное знамя» колхозăн фермисенче выльăхсен йышĕ çулран çул ÿссе пырать. Çамрăк выльăхсене лайăх пăхса ÿстернипе колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана кăçал та пур выльăхсем енĕпе те тултарчĕ, **государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлесе памалли плана иртерсе тултарчĕ.**

Çакăнпа пĕрлех кунта выльăхсен ăратлăхне лайăхлатас тĕлĕшпе те тимлĕн ĕçлеççĕ. Колхозăн сысна фермипче халиччен вырăнти сыснасем е метиссем çеç пулнă пулсан, халь колхоз ăратлă сыснасем илчĕ. Колхозăн пур выльăхĕсене те лайăх пăхса усрама ăшă, таса витесем пур, апат-çимĕç çителĕклĕ.

Д. СЕДОВ.

Кунçул

Пирĕн кунсем ăшă мар,
Ăшă мар-тăк ăшăтар,—
Атьăр,
Атьăр ăшăтар!

Пирĕн çулсем такăр мар,
Такăр мар-тăк такăрлар,—
Атьăр,
Атьăр такăрлар!

Вут кăлартăр хĕçпăшал,
Вăйне патăр паттăр ал,—
Атьăр,
Атьăр çапăçар!

Пирĕн кунçул хамăрта,
Ĕмĕт-шухăш кăкăрта,—
Атьăр,
Атьăр малалла!

В. ХУДАРСЕМ.
ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ.

ФРОНТОВИКСЕНЕ ПУЛĂШАÇÇĔ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамăр корр.). Районри колхозсем фронтовиксемпе тачă çыхăну тытса тăраççĕ. «Родина» колхоз членĕсем Иван Тимофеевпа Роман Лаврентьев фронта кайиччен колхозра стахановецсем шутланнă. Халĕ вĕсем фронтри гитлерла вăрăкурасене хирĕç паттăррăн çапăçаççĕ. Вĕсене командованин заданийĕсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата паттăрлăх кăтартнăшăн «За отвагу» медаль парса наградăланă. Паттăр ентешĕсем «Родина» колхозпа яланах çыхăну тытаççĕ. Вĕсем хăйсен çырăвĕсенче колхозниксемпе колхозницăсене фронтри пек ĕçлеме чĕнеççĕ. Çак колхозăн членĕ пулнă Александр Се[illegible]ронтра паттăррăн çапăçать[illegible] темиçе хут та тав [illegible]ăш службӑра тăракан рота командирĕ унăн арăмĕ патне çыру янă. Вăл хăйĕн çырăвĕнче Семенов юлташ фронтра хăюллăн çапăçни çинчен çырса пĕлтернĕ.

Колхозниксем фронтри юлташĕсене манмаççĕ, вĕсем патне парнесем яраççĕ, вĕсен çемьисене пулăшса тăраççĕ. Çак кунсенче вĕсем Тимофеев, Семенов т. ыт. юлташсем патне ярса пама çĕнĕ çул парнисем — пĕрер пăт тулă çăнăхĕнчен пĕçернĕ сухари, пĕрер мăшăр çăм алшăлли носки хатĕрлерĕç.

Колхоз 1942 çулта фронтовиксен 18 çемьине тырă тата фронтовиксен чылай хуçалăхне вутă хатĕрлесе парса пулăшнă.

С. ШАДИН.

Ют çĕршывсенче

ДАРЛАНА ВĔЛЕРНИ

ЛОНДОН, декабрĕн 25-мĕшĕ (ТАСС). Рейтер агентстви Алжирти радио пĕлтернине сарать, çав пĕлтерÿре Дарлана вĕлерни çинчен тĕплĕнтерех каланă. Вĕлерекенни—20 çулхи çамрăк çын, вăл кам иккенне пĕлеймен-ха. Вăл Дарлана унăн приемнăйĕнче кĕтсе тăнă, Дарлан пырсан вара ăна виçĕ хутчен пенĕ. Пĕр пуля Дарлана çăварĕнчен лекнĕ, иккĕмĕшĕ—ÿпкине лекнĕ. Дарлана вĕлерекен хăйне тытса чарма хăтланнă служащие те пенĕ, вăл ăна уринчен лектернĕ. Тепĕр служащи вара вĕлерекене тытса чарнă. Вĕлерекене çийĕнчех допрос тунă, анчах та унăн ятне те, мĕнле халăхран иккенне те пĕлеймен.

ЛОНДОН. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Дарлан ертсе пынă наци совечĕн членĕ Бержере генерал Алжирти радио тăрăх тухса каланă, вăл халăха лăпкă пурăнма чĕннĕ. Бержере каланă тăрăх, Дарлана ăна союзниксем енче тăрса çапăçса Франци халăхĕн кăмăлне тупăшăн çиленнĕ çынсем хĕтĕртнипе вĕлернĕ. Бержере çапла каланă: Жиро, француз войскисен главнăй командующийĕ пулса тăрса, йĕркене сыхласа тăрас ĕçе хăй çине илет, йĕркене пăсма хăтланакансене пĕр шеллемесĕр пусарĕç, тенĕ.

ЛОНДОН. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, декабрĕн 26-мĕшĕнче Çурçĕр Африкăри французсен наци совечĕн ларăвĕ пулса иртет, вăл Дарлана вĕлернĕ май сиксе тухнă политикăллă ыйтусене пăхса тухать. Çывăх вăхăтрах Алжира Беса генерал тата Францин Çурçĕр Африкинчи генерал-губернатор Буассон пымалла.

ВАШИНГТОН. Дарлана вĕлерни пирки Рузвельт çакăн пек заявлени тунă: «Дарлана хăравçăлла вĕлерни вăл малтан шухăшласа хунă тăрăх тунă ĕç пулса тăрать. Пĕрлешнĕ çĕршывсен руководителĕсем пурте çапла каланипе килĕшĕç. Нацизм, фашизм, çар диктатури—саксем урăхла шухăшлаççĕ. Дарлана вĕлернĕ çын е çынсем часах суд умне тăрĕç тесе шанатăп эпĕ», тенĕ Рузвельт.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Трест Чувашлеспродторг приглашает на работу начальника планово-финансового отдела, старшего бухгалтера, бухгалтера-ревизора и для работы в районах старших бухгалтеров.

Обращаться по адресу: г. Чебоксары, ул. Урицкого, 36.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 11650 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф 6. 53 84 п.